Ушинский К.Д. Чĕкеç : [сăвă] / К.Д. Ушинский; [вырăсларан К.В. Иванов куçарнă] // Пионер сасси. – 1940. – 15 пуш.

# Чĕкеç

*Чĕкеç, чĕкеç—чĕкеçĕ,*
*Пĕртте канма пĕлмерĕ:*
*Кунĕпе вĕçсе çӳрерĕ,*
*Улăм пĕрчи пуçтарчĕ,*
*Тăмпа шăлса çыпăçтарчĕ,*
*Хăйне йăва çавăрчĕ.*
*Хăйне йăва çавăрчĕ,*
*Çăмарта тума тытăнчĕ:*
*Çăмартасем турĕ те,*
*Йăви çинчен анмасть те—*
*Чĕп тухасса кĕтет вăл.*
*Акă, чĕпĕ кăларчĕ:*
*Чĕпписем чăйлатаççĕ,*
*Çиме апат ыйтаççĕ.*
*Чĕкеç, чĕкеç—чĕкеçĕ,*
*Кунĕпе вĕçсе çӳрет вăл,*
*Пĕртте канма пĕлмест вăл:*
*Шăна-пăван пуçтарать,*
*Чĕппisене тăрантарать.*